Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

# КАПКĂН

12-мĕш № ИЙУНШĔН 1928-мĕшĕ.

— 4-мĕш ҫул тухать. —

## Атăл хĕрринҫе.



— Кооператтивра хăшĕ тăнипе хăшĕ тăманнине пĕлме хĕн кунта Пурте йĕмсĕр выртаççĕ.

# Инкек вăл курăнса килмест.

Мĕнле хăйаматла пулӡĕха ĕнтĕ, йулташсем! Кăштах, снаӡӡăт, ăшăрах вырăн тупаҫ̆ те ҫын, ăна курайми пулаҫҫĕ—хурт ҫине пуснă пек, кĕлетки ҫине пусса илеҫҫи унта, йе сăмсине хĕстерсе лартаҫҫĕ пĕр-пĕр хушăка.

Ав, Риван Иакурне вĕт, ҫаклатса лартнă сутра. Тен вăл Совет влаҫне хытă йуратнă,—ăшĕнӡен йуратмасан та, тулашĕнӡен пулин те, йуратнах ĕнтĕ вăл, ҫапах ăна лаша вăррисемпе пĕрле хупса лартнă.

Ĕҫĕ те пысăк ĕҫех мар, шăна пек анӡах.

***

Пĕр уйăх та вунă кун авалрах Риван Иакурĕн кушакки урисене ҫулакаланă. Ахăр Риван Иакурне астарнă пуӡ,—хăй хуҫи ларакан хапха йенеллех пăхса ларнă.

— Аха! Хăлха урлах пĕр урипе шăлса илӡĕ. Кушак хăлха урлă шăлса илсен, хăна килет теҫҫĕ, тесе шухăшланă ҫав вăхăтра Риван Иакурĕ.

Шухăшласа пĕтериӡӡенех, Иакур хăлхине Раман ывăлĕсем, урамра, кĕператтив ҫинӡен пĕр вăтанмасăр каласса тăни илтĕнсе кайнă. Каӡака Михалипе унăн хусах йулташĕсем кĕператтив уҫнă, снаӡӡăт, йалта. М-га! 20 тенкĕллĕх тавар кӯнĕ, ҫăмăлттайсем!

Кăна илтсен Риван Иакурĕ хăнт та туман, мĕншĕн тесен кĕператтивран хăрама вăл мулкаӡ мар. Тен, вăл ун пеккисене ӡылаҫ̆ куркаланă. Тен, хăти синӡен аса илнĕ пуӡ вăл ҫав вăхăгра.

Хăти унăн 12 ҫухрăмра пурăнаҫ̆ те, 30 ҫухрăмра (Шупашкарта) пурăннинӡен те иртерет. Унăн лавкки ҫумĕнӡе икĕ кĕператтив лараҫ̆, тет,—пĕри, снаӡӡăт, пĕр йенӡе, тепри тепĕр йенӡе.

Аӡасене ĕскĕртмеллисем, пите хĕретмелли сăрсем, туххисем, кăнахватсем, пурҫăн йĕмсем сутаҫҫĕ, тет, вара унта.

— Турă ыр сырлăх патăрах ку кĕператтивсене! тетӡĕ, тет, вара Иакурăн 12 ҫухрăмра пурнакан хăтийĕ кĕператтивсене асăнсан.

* * *

Тепĕр ернерен пăхатăп, тет Риван Иакурĕ, хайхи ҫĕнĕ кĕператтив патнелле лавсем, лавсем, снаӡӡăт, пыраҫҫĕ, тет. Ҫăнăхĕ те, кĕрпи те, краҫҫынĕ те, пулли те, шушки те, пăти те, унки те, тапакĕ те, пурте пур, тет.

Кĕператтивра халăх вĕллери хурт пек сĕрлет, тет. Риван Иакурĕ патне ҫын тапакне туртма йуратакансем ҫеҫ пыркаласа кайаҫҫĕ, тет вара йерҫнĕ вăхăтра.

Риван Иакурĕ мĕнле майпа кĕператтива пĕтерессн ҫинӡен пуппа калаҫса пăхнă.

Тен пупĕ ăна пулăшма сăмах та панă пуӡ те, анӡах ĕҫĕ тухайман. Вара Риван Иакурĕ ҫветтуйа тухнă аслă кнеҫсен сăнĕсене ӡиркӯрен илсе пырса, хăйĕн килне молепĕн тутарса пăхнă, тата хăйĕн лавкка тухмалли тумтирĕсене—сăкманне, кĕпине, шалаварне, айалти йĕмне, тата тапак хутаҫҫине „светит" тутарнă.

Кравул! тесех кăшкăрмалла—халăх ҫав-ҫавах пымасҫ̆ лавкка.

Пит хытă, хытăран та хытă, ҫиленмеллипех ҫиленнĕ вара Риван Иакурĕ кĕператтив ҫине.

Пĕре, ӯпресем вăхăтĕнӡе, Иакура ӯпресем (тур хупламанскерсем!) аптратса ҫитернĕ. Риван Иакурĕ ӯпресем ҫине ҫиленнипе, кĕператтив ҫурӡĕн ӡӯреӡисене ӡанклаттарса тухнă, кĕператтив пуҫлăхĕн ырхан питĕнӡен ҫапкаласа пăхнă.

Кĕператтив пуҫлăхĕ ҫиленнĕ ҫавăншăн Иакур ҫине. Сута панă. Хаӡхи етем ҫавăн пек ĕнтĕ вăл. Ĕҫĕ ăна „мошенник" тетĕн—вăл ҫавăншăнах сан ҫине ҫиленет. Сута параҫ̆. Ҫапма та йурамасҫ̆ ăна. Иртĕнсе кайнă мари хаӡхи халăх! Авă, Риван Иакура та суга панă. Сосвани ҫук ҫав хаӡхи халăхăн. Ара, Риван Иакурĕ пек ҫын пĕтĕм опӡипе те ҫук—ĕлĕк ăна сăпавайсем аслă параӡӡĕҫ, страшниксем „Иакур Ртиванӡă" тесе ӡĕнеӡӡĕҫ ăна, халĕ... ĕлĕк ӡăнкăр-ӡанкăр ҫатансăр ҫӯреме йуратманскере, хыт урапа та мар, утсăр урапапа та мар, хăйĕн ватăлма пуҫланă урисемпе уттарсах тĕрмене илсе кайнă. Măшкăл!..

Лăппăн, ӡĕрӡунсене аӡашласа ҫил вĕрет. Риван Иакурне етемсем пăшалсемпе тĕрмене илсе кайнине пĕлмест вăл—айван ҫил. Пĕлнĕ пулсан, аӡашлас вырăнне, ҫĕлĕксĕр тăратса хăварĕӡӡĕ те вăл сирĕн пеккисене!

ИАВАН-МУӠИ.

# Ĕç пирши урлă.

Ĕç пирши урлă илнĕ платниксем платник ĕçне пĕлмерĕç.
(Ҫăваш профсойуссен спесĕн телекаҫĕ калани).



**3 çулхи хĕр**: Асанне, пĕлместĕни — манăн ăçталла каймаллаши? Кирпĕҫ йатма йаҫĕç те мана.

**90 çулхи карҫăк**: Пĕлместĕп. Хамăнне те тупаймарăм. Россыҫнăйа йаҫĕç те мана...

# Ку та хамăра-хамăр тишкерӳ.

— Ну, Çитăр Иванҫă! Иепле иртет сирĕн патăрта хамăра-хамăр тишкерӳ кампаннийĕ?

— Аван пыраĭха поккутă, Иакур Иакурҫă. Лайăхах хĕртесçĕха пĕрне-пĕри сопранисенҫе. Матви хĕртрĕ Луккана, Лукка хĕртрĕ Матвийе, Çăпрук хĕртрĕ Мĕтрийе, Мĕтри çĕмĕрҫĕ Ерхипе, Карпухха çĕмĕрҫĕ „Капкăна“. Хытӑ лекрĕ тата Сахруна хăй укçипе ерех илсе ĕçнĕшĕн, Мишше арăмне те лайăхах лекрĕ ҫăркуççи таран кĕпе тăхăнса çӳренĕшĕн. Аван лектеретпĕрха кирлĕ-кирлĕ çынна ку кампанире.

— Уҫрештени пуçлăхĕсем пӳрократлanса кайни çинҫен калаçмарĕçи?

— Çукха. Ун çинҫен никамăн та калаçасси килмен.

Сенĕк.

**Пирĕн урам пĕҫĕк мар.**
**Пĕҫĕк мар та пуйан мар.**
**Пурнăç çитмест пулин те—**
**„Капкăн“ шурнал пурин те.**

# Çӳпçи çине хупăлҫи.

Унтри Иăванҫ Моçкин хулари пĕр уҫрештенире шур хутсене вараласа пурăнаҫ. Унăн арăмĕ йалта алăри аҫипе минтрешсе тăкне кăлараҫ. Тепри пулсан арăмне тахçанах хулана сĕгĕрсе килмелле те, анҫах Унтри Иăванҫ вĕсем йышши ухмах çын мар. Мĕншĕн тесен вăл çамрăк çын, вăл хулара урăхне те тупма пултараҫ. Тепĕр йенҫен—хулари çынна çăпаталлă арăмпа пурăнни те килĕшсех каймасҫ вĕт. Ҫăвашран майра тума... хаҫхи саманара мапаçăнсенҫе çитсипуставне тупмалла мар... Лайăхрах тишкерсе пăхсан, хулара тепĕр арăм тупнисĕр пусне нимĕн те аванни çук. Унтри пусне те çак шухăш питĕ çирĕп кĕрсе ларнă? Çавăнпа вăл снакковисем:—Есĕ авланни, авланмани, тесе ыйтсан, «уйăрăлнă» тесе иртерсе йараҫ. Хĕрсем умĕнҫе йаланах авланман çын пулса калаçаҫ.

Шухăш вăл шухăш майĕпе, анҫах шухăшланипех ĕç пулмасҫ вĕт. Тем тĕрлĕ комиççисем çеç ăна, ĕçлес вырăнне, шухăшласа плансем туса ларма йуратаççĕ. Унтри уватҫал комиççисен ҫленĕ мар. Вăл шухăша килнĕ ĕçе ҫасрах тума йуратаҫ.

— Авланас тăк çамрăкраххине илес, вунçиҫ çулхине илес, терĕ вăл пĕр ирçинҫе çăвăрса тăрсан хăйне хăй. Çав кунах Унтри арăм тума йурăхлă вунçиҫ çулхи хĕр шырама тытăнҫĕ. Малтанах хăй паллакă хĕрсене пуç тĕшшĕн тĕрĕслесе тухрĕ:—Хăшне илме йураҫши?.. Каҫтăна илес—сăмси ытла ашĕвĕр, урисем те улăм пĕрҫи пек çинçешке... Райккăна—ытла шыçмак, çитменне çамрăках та мар... Ҫуççăна... калаçма пĕлмест, кулнă ҫух çăварĕ ытла сарлака... Кам мурне тупасха?..

Хăй пусĕн арҫинҫе пĕр йурăхлă хĕр те тупайман пирки, Унтри каçпа пуҫвара карĕ. Пуҫварта тем йышши те пур. Саррисем, хурисем, каççăр сăмсаллисем, ҫапрассисем, вăрăммисем, кĕскисем, пурте пур те... Шырасан шырасан, Унтрин куçĕсем пĕр пĕҫикрех çамрăк пит-куçлă, ыраш улăм пек сарă çӳçлĕ хĕр куçĕсемпе тĕл пулҫĕç.

— Çак хĕре хам арăм тăвас мар тăк, епĕ те епĕ пулам мар, терĕ Унтри çавăнтах хĕр хыççăн тăрса утса. Пĕр вилĕ каç çак хĕр хыççăн çапкаланса çӳресен, унпа Унтри палашрĕ палашрех. Палашсан ыраш улăм çӳçлĕ хĕр Унтрийе пушшех хытă килĕшсе карĕ...

— Есĕр миçе çулта? тесе ыйтрĕ пĕре Унтрирен ыраш улăм çӳçлĕ хĕр пуҫварта ларнă ҫух.

— Çирĕм тăватгăра, терĕ Унтри ултă çулне пытарса хăварса.

— А есĕр минçере?.

— Минçере пек туйăнаҫ?..

—Минçе калас... вунçиҫҫĕ, вунсаккăртан ытла мар...

— Тĕрĕс, тĕрĕс... Мĕнле пĕлтĕр?..

— Ман ҫĕре сисет.

— А есĕр авланмани?..

— Ну, што вы... мĕн кирлĕ мара калаçаттăр. А есĕр... çук çук, пустуй каларăм, сирĕн çулта кам каҫҫа тухтăр...

Çапла калаçса ларнă хыççăн ик вилĕ кун иртри иртмери, сарă çӳçлĕ Таççă Унтри патне пурăнма куçрĕ. Унтри Сакса кайасси çинҫен аса та илтермерĕ. Таççă та темшĕн нимех те шарламарĕ. Унтрин тахçантаапа аҫашланса пурăннă ĕмĕҫĕ тинех çитрĕ.

Пĕр ирхине Унтрипе Таççă криваҫ çинҫе ҫӳреҫе виттĕр пăхакан хĕвелпе аҫашланса ӳлĕм аҫаллă-пăҫаллă пулса пурăнасси çинҫен калаçса выртнă ҫух, алăк хыçĕнҫе темле сасăсем илтĕнсе карĕç. Кĕç алăка та килсе шаккарĕç. Унтри вырăн çинҫен тăрса алăка уçрĕ те, Унтрисем патне пĕр хĕрарăмпа пĕр арçын кĕрсе тăҫĕç. Иккĕшĕн аллинҫе те çиттипе ҫăркана аҫасем.

Унтрин ҫĕри пок! турĕ. Таççă ҫĕри те мăлатук пек шаккама пуçларĕ?

— Ах, есĕ каплаиç хулара... И ли-у-у... на тыт, шуйтан пусĕ, хун аҫуна, тăрантар,—сухăрса йаҫĕ аҫаллă хĕрарăм кĕнĕ кĕменех.

— На, шуйттан, тыт, çуратма пĕлтĕн тĕк, тесе ывăтса хăварҫĕ арçын алăри аҫине Таççă ҫĕрçи çине. Кĕç хĕрарăм та тухса карĕ.

Унтрипе Таççă пĕрпĕрин куçĕнҫен ҫарр пăхса илҫĕç те, иккĕш те ҫĕрçисем çинҫи аҫисене тытса нимшарламасăр ларса йулҫĕç.

РОНИ.

## РОПИНСОНСЕМ.

Ĕлĕк авал тинĕс тăвăлĕпе пĕр карап çĕмĕрлсе шыва путнă ђухне Ропинсон Крусо йатлă пĕр акăлђан çынвине тинĕс хумĕ пĕр етем пурăнман утрав çине кăларса пăрахса, вăл вара унта темиçе çул хушши тĕнђе пурнăçĕн хыпарне пĕлмесĕр пурăннă. Нумайах пулмасť, çавăн пек Ропинсонсем хамăр Шупашкар çывăхĕнђех експетитси йамасăрах тупрăмăр. Вĕсем „Шашкар пристăнĕ“ тейекен çĕрте, Атăл шывĕ хĕррипе вунвиçĕ кил пĕр йал пулса пурăнаççĕ. Иалĕн йађĕ çук вара. Вĕсем унта хăш вăхăтри тăвăлпа, мĕнле хумпа йухăнса пуçтарăннине никам та пĕлмест; ăçтан килнине те никам та тĕплĕн пĕлмест. Хăйсен сăмахĕсенђен шутласан, вĕсем Аслă-Сĕнтĕр патĕнђи Тапакассисем пулмалла пек. Вĕсем пурте çуртйĕрпех пурăнаççĕ, унта çĕр çукран вĕсем тырă-пулă тумаççĕ, çăмăл ремеслесемпе пурăнаççĕ: Атăлта пулă тытаççĕ, хăшĕ пĕри вăрман—йывăçпа сутă тăваççĕ, тата хăшĕ паршăсемпе çӯрекен матруссенђен пулăсем туйанса йулса сутă тăваççĕ, ытла хастарлисем хирти йалсене кайса йӯн хакпа тырă пуçтарса килсе икĕ виççĕ хакпа сутса услам туса пурăнаççĕ. Вĕсем кам иккенне никам та пĕлесшĕн пулман, вĕсем хăйсем те никама та пĕлесшĕн мар. Вĕсем йалканашне, РĔК е те пĕлмеççĕха.

— РĔК сире пĕлети? тесе ыйтсан:

— Мĕн пĕлмелле пире ерек? Епир ăна хамăр пит лайăх пĕлетпĕр, услам ытлэрах тупсан ăна епĕр çемйипех савăнса ĕçетпĕр, теççĕ.

— Финакĕнта пĕлетĕри? тесен:

— Мĕн йапала вăл финакĕн? Миçе пус тăраť ун аршăнĕ? теççĕ.

Çапла пурăнаççĕ Шашкарти Ропинсонсем. Çак ђаваш Ропинсонĕсене ђăваш çĕршывне сăнакан ушкăн та пĕлмест. Вĕсенђен пит сийенлĕ ђаплă çпеккуђантсем пулса кайађђен, Тутаркас РĔК-ĕн хађтерех унта пырса çав 13 киле йал йађĕ парса хăварас пулаť, финакĕнтăн та вĕсем мĕнле ремеслапа хырăм тăрантарса пурăннине сăнаса тухса „ђаваш çĕршывне сăнакан ушкăна“ пĕлтерес пулаť.

СЕНĔК.

## Ђисткă.

Ђ ă н к ă р... турĕ телефон
Пӯлĕмре.
— Кам кирлĕ сана—
Епĕ сав!*)
—· Мĕнле, мĕнле... вара
Ђисткă—тен?..
Ах, мĕнле ĕç ку вара
Вăхăтсăр?

. . . . . . . . . . . . . . .

Аршăнирлĕ тĕрлĕ мерлĕ
Хутсене
Ытăмсемпех тасатаççĕ
Çенĕке—
Виçĕ çулхи—пăнтăхтарнă
Хутсене
„Курорталла“ ăсатаççĕ
Сакайне...
Ђăнкăр-ђанкăр, путылккисем
Кантăкран,—
Ревисор вĕт...
Пуçлăх пӯлĕм алăк çинђи
Вывĕски:
„Ыйтмасăр кĕме йураť“
— Тепĕр май.

. . . . . . . . . . . . . . .

Виçĕ майра—машшинисткă
„Ђăвашла“.
„Ђăвашланнă“ пурте „ђăваш“
Ç ă п а т а!
Пурте хатĕр—хатĕрленнĕ
„Ђисткăна“.
Слушăшђисем—„пролеттари“—
„Ђăвашсем“

. . . . . . . . . . . . . . .

Хупхура çын кĕђĕ тăђĕ
Алăкран.
Мĕлкесемпе кăмакасем
Пăхкалаť.
— Ах, тамаша, кам пулђĕ ку
Ревисор!..
— Кунта епĕр... Иртĕр кунта—
Пурте пур!
—Иурĕ, йурĕ, йурĕ теха... Хăш хăрăмлă
Кăмаки?
Тăрăст, тапрĕ пуçлăх пирĕн
Урайне:
-- Кирлĕ мар ес—хăрăм хуçи,
Пшол! Вон!
— Пушарнайран хăрăмсене
Тасатмашăн
Иађĕç те...
Пури вара тасатмалли
К ă м а к и?

К. РУССАКОВ.

*) Сав—саветăшђи.




## Хуплу ăстисем.

Аш пулсан хуплу тума лайăх, тенĕ авалхи ҫынсем, пирĕн Ђăвашкис инструктăрĕсем ашсăрах (мимесĕрех) хуплусем (хуплашкасем) тăваҫҫĕ.

Хуплашка тунă хыҫҫăн вара кĕнеки хĕрнерех ларма шăпа тухнă саспаллисене ним шеллемесĕрех касса пăрахаҫҫĕ, хуплушка айĕнђи хутсене лайăххăн ҫыпăҫтараймаҫҫĕ. Тата.. кĕнеки хĕррисене кăвак сăрпа сăрласа параҫҫĕ те, кĕнекине алпа тытсанах сăрĕ ал ҫине, ал ҫинђен (ал панă ђух) тепĕр ҫын алли ҫине, тепĕр ҫын алли ҫинђен тата тепĕр ҫын алли ҫине, унтан тата тепĕр ҫын алли ҫине, ҫапла ламрам-лам куҫса пыраҫ, йе алупа хăвăн сăмсуна тытсан, сăрĕ сăмсуна ҫыпăҫаҫ, сăмсунтан, ђуп тунă ђух, арăму сăмсине ҫыпăҫаҫ, арăму сăмсинђен тепĕр арҫын сăмсине... ҫапла хуплушкине Ђăвашкиса тутарнă кĕнекене пĕрпĕр ҫын асăрхаймасăр алла тытнă кун вара, Шупашкар мунђинђе пилегсем пиг нумай кайса пыраҫҫĕ, ҫăвăнас текенсем нумай пулаҫҫĕ. Шупашкар мунђи, вăран, ма Ђăвашкиса тав тумастăн ҫавăншăн.

## Илйннккăри пахалăх.

Выђăх-ђĕрлĕх хуҫине пăхаҫ, теҫҫĕ. Хуҫине пăхнăран пуђ Илйинкăри канмалли ҫуртри тўшек-минтерсенђе пыйтăсем аташса кайнă. Пит нумай, тет вара унта пыйтă тенĕ ăратлă выђăхђĕрлĕх.

Ан хăрăр, канма пыракансем! Куђтурă револђутсиђђен пĕтег вăл.

## Сатађ паратăп.

Нумай пулмаҫ, Пуххарĕн йулташ: йулашки ҫулталăк хушшинђе ССРС-ĕнђи халăх пĕр 1.000.000.000 тенкĕ ĕҫсе йанă тенĕђђĕ.

Вăт, ҫак укҫа шутĕнђен Иетĕрнери Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕн макаҫĕнĕн пуҫлăхĕ ҫине миҫе прођђăн ўкет-ши?

Шутлакансене сăпаҫҫипă калатпăр.

Унти.

## Шанђăк.

Хăш ђухне шанђăк та ытлашши шанђăклах пулмаҫ. Кушанак ҫыраҫ:

Ĕсмел пасар йалĕнђи (Сĕнтĕрвăрри рай.) „Шанђăк" йатлă копперативв правлени ђленĕ Сиҫакков майăн 11-мĕшĕнђе Крыҫҫин усламҫа кĕренккине 16 шар пуспа 1 катка пулă панă. Кайран Крыҫҫĕнĕ вăл пулă кĕренккине 23-шер пуспа сутса пĕтернĕ. Ҫиҫакков ђас ђасах ҫапла хăтланкалаҫ, теҫҫĕ.

„Шанђăк" шаннă ђлен Ҫиҫакков шанса кайнă. Шанса кайнăскере кăларса пăрахсан та пымалла ăна.

## Сурăх ҫулĕ.

Платка йалĕнђи (Шупашкар рай.) йалсовет сурăх ҫулĕпе кайма пуҫланă.

Сута каймалли повескă пынă пĕр ҫын йађĕпе. Айăпланаканни йалсовет претсетаттĕлне ерех ĕҫтернĕ те, лешĕ вара повескине памалли ҫынна паман. Вара повескă илмелли ҫын сут пулнине те пĕлмесĕрех йулнă. Тивĕҫли ҫапла хăтланма, тет И-л йулташ.

Тивĕҫлĕ. Тивĕҫлĕ пулмасăр. „Капкăна" ҫакланма та тивĕҫлĕ пулђĕ.

## Копператтив пуйтараҫ.

Камăн пуйасси килет, ҫавсем Йетĕрне хулинђе хула копператтивĕ ҫумĕнђерех пивной уҫăр та, пивнойĕнђе кулађпа хура ҫăкăр сутти уҫăр. Хула копператтивĕнђен: кулађне килокрамне 25 пуспа, хура ҫăкрине 10 пуспа илеттĕр, вара хăвăр кулађне пĕр кĕренккине 20 пуспа, хура ҫăкрине пĕр кĕренккине 10 пуспа сутаттăр. Тоххот сирĕн аван пулас, мĕншĕн тесен хула копператтивĕнђен есĕр ҫимелли тавраша пĕтĕмпех илсе кайаттăр.

Халђ покка ҫапла Мортвинăв пĕђђенех пуйатха.

Акакку.

# Алтăр-çăлтăр вăрра тытрĕ.

Вăррăн çĕлĕкĕ çунат. (Вырăс халапĕ).

Вырăс халапĕ ҫăвашсемшĕн те йатнех курăнат.

Аслă Патăрйел çине кăçал Алтăр-Çăлтăр ситнĕ тăнă. Шикленсех ӳкрĕç сыру çӳретекенсем, ăстасем сӳпĕлтетме тытăнҫĕç:

— Текех пулмаст пулĕ ĕнтĕ...

— Курат пулмалла, куçлă... Кураççех. .

Шатах сăмсисене каçăртнă, шатах пĕлĕт çинелле карăнса тăраççĕ, шереметсем.

— —

„Çăлтăр витĕр çул курăнат,
Епĕр кайас çул пуҫ çав“

тесе йурлаҫҫĕç çамрăксем. Салтак слушпине кайакансем те, ыттисем те йурлаççĕ ăна; мĕн авалтанпах шăрапат ку йурă ҫăваш хушшинҫе.

Çăлтăрĕсем кун пек йурланине туйаççех пулмалла—темле халĕ айалалла тата хытăрах ӳпĕнсе, тинкеререх пăхма тытăннă пек туйăнат. Аслă Патăрйел çинех пăхаççĕ.

Çыру çӳретекенсем ҫĕрисене хыпалама, урисемпе кукаҫтеме тытăнҫĕç.

— —

„Канаш“ăн 96-мĕш номĕрĕнҫе Алтăр Çăлтăра асăнса, Илйин йатлă писмоностсă çырусене вăхăтра çитермени, сĕтерсе пĕтерни çинҫен çырнă...

Пирĕн çинҫен мари вăл—епĕр те сĕтеркелетпĕр? Илйинĕ те хамăр ĕретрех мари?!.

Кусса кайрĕ хут кустăркăҫи. Шупашкарĕ-Патăрйелĕ-мĕнĕ пĕтĕмпех сиксе тăҫĕç.

Ҫăвашларан вырăсла куçарттараççĕ. Куçараканĕсем суккăр — хăйсем мĕн çырнине пĕлмеççĕ. Хутне наҫҫаҫнĕксем иккĕн (Çиновйĕв, Оçиппăв) алă пусса, малалла йараççĕ.

Аслă Патăрйелте ку хута тепри ресоҫутсилесе, ăсатуллă çырусемпе çыхса питĕрсе Шупашкара вĕçтерет.

Шупашкартан каллех кайалла.

Каллех икшер-виçшерĕн алă пусса «ăсату»лаççĕ...

«Алтăр Çăлтăр йалĕнҫе Илйин пулмасан, кам та пулин пулмаллах, çавна тытса çатăртаттарăр! Мĕн сăмахпа çеç калаттăр—малашне усал ѐç тăвакансене тĕплĕрех шырăр, çӳçрен тăпалтарăр» тенĕ хуҫĕ çине,—шултрайăн лапаттарса хунă.

— —

Патăрйелĕ каллех Шупашкара вĕçтерет.

Хуҫĕ çине:

— „... Çукçке, çук! Иал йатне вырăсла пĕлгерĕр“ тенĕ. Килет...

Хут купи каллех Патăрйелĕнҫе. Райĕçтăвком сĕтелллисем тăрăх кусса кайрĕ. „Алтăр Çăлтăрне вырăсла „Большая Медведица“ темелле çеç пулнă мĕн. РЁК-ре хут çине: „деревня Алатар Салтар в Батырев. р-не не имеет“ тесе лаплаттараççĕ. Кустăркăҫ гатах малалла кусат...

Пĕр 20 сĕтел урлă тĕпĕртетсе каçрĕ, 10—12 алă пусса илемлетсе йаҫĕç. Çаплах тулса çитеймен.

Иулашкинелле сулăнас, терĕ курăнат, ретаксине тĕркĕлтетсе кĕҫĕ. Пăхăсăн кунта та ĕç пĕтмелле пек мар:

„Просьба дать справку какое название в переводе на русский Алтар Салтар“, тенĕ, калла ыйтаççĕ.. Ответ парас та, проккурор патнелле ăсатас пулĕ.

Икĕ уйăх çӳрет хут кустăркăҫи. Хулăмлансах çитнĕ... Алтăр Çăлтăрĕ мĕнле кулăшпи пĕлĕтре!

Ҫăвашсем алă пусаççĕ, 12 ĕн алă пуснă.

Алтăр Çăлтăр тени—кореспотент йаҫĕ иккенне тавçăрса илме пĕррин те ăсĕ çитмен.

Илйинĕ Елĕк районĕнҫе ĕçлет. Елĕк тесе çырнине такам та курмалла. Те пĕлĕт çинелле пăхса ĕçленипе вулама манса кайнă вара кусем.

Те хăйсем ҫăнахах та Илйин писмоностсăран 10—15 хут айăплăраххинҫен килҫĕ ку? Çаплах пулмалла.

Халĕ Алтăр-çăлтăрсем курна курман хыпкалашса ӳкеççĕ.

Лайăххрах тивретĕрха „Алтăр-çăлтăрсем“, вирлĕрех хĕртĕр!

Кореспотентсем, есĕр пĕлĕтре мар пулин те вырăнсăр хут кустăркăҫи кустараракансене, волокитҫĕк ҫлнавнĕксене лайăххрах куратăр.

Вĕсене лайăххрах ĕнтме кирлĕ, лайăххрах!

КАЛАМПИ.



—Мĕн хăтланатăн есĕ? Мĕншĕн куҫĕски (тĕкĕр) ҫакатăн унта? — Пирĕн ҫтена хаҫатне хĕрсем вуламаҫҫĕ. Вĕсем те вулаҫҫăр.

Хастарлӑ аҫа.



# Ырă кун кĕтеççĕ.

(Вăрнар районĕнҫи Кăкшăмра пулнă ĕç).

— Иулташсем!.. Кĕпер йусас... Иалти кĕпере... Тата кĕпер патĕнҫи йепесапана та тасатас... Лайăх мар...

— Санăн ĕç, ес ту, тасат...

— Манăн ĕç... Епĕ айăпли? Пухăр халăхран укçа та, çиҫас туса лартăпăр...

— Хаклă тăвансем,—терĕ кĕпер тăвакан.—Ҫăнах та хам тытăнсан уйăхран туса памалла. Халăхпа калаçса пăхас, вăл аванрах.

—Каккуй унта халăх пирĕн Кăкшăм кĕперишĕн.. Хакне хăвах пĕлен, ту хăвах.

Хăш-ш... сывласа йаҫĕ те кĕпер тăвакан каларĕ: Штошă епĕ хирĕçмĕп, тăвăпăр.

Халăх хĕпĕртерĕ кĕпер тăвассине пĕлсен.—Ну, кĕперне тусан лаша ури те хуçăлмĕ. Тата кĕпер çывăхĕнҫи пылҫăкĕ... çÿреме çук...

Ик-виç уйăх та иртрĕ. Паллă, ҫаплă такçанах кĕпер тума тытăнма кĕтнĕ кун çывхарса çитрĕ. Кĕпер тăвакансем тума хатĕрленеççĕ... Лайăх кун кĕтеççĕ... Вăл кун лайăх пулмарĕ.. Кĕтсе илеймерĕç. Ĕç вăхăҫĕ çитрĕ,—тыр вырмалла, çапмалла. Çитес ернери тунтикун опесаттĕлнă тума тытăнмалла, терĕç.

Тунтикун, усал кун...—Вырсарникун каçхине çур аршăн таран йур çуса лартрĕ. Иулҫĕ к ĕ п е р 1928-мĕш çулҫен. Халĕ йуман каскасем—пĕренесем кĕпер çывăхĕнҫе сапăнса выртаççĕ, кĕпер тума шутлаççĕ... Халăх кăна пăшăрханаĭ:—Ку йуман каскасене йатса та пĕтереççĕ пуҫ.—Нăй-найта, мăр-мур...

Хĕлле. Халăх пуххи. Кун йĕркинҫе пÿрократтисăмпа кĕрешесси... Кĕпер çинҫен те сÿтсе йавмалла пулаĭ... Пур ĕçе те халăхпа пĕрле тумалла, йулташсем! Çитменлĕхсем çинҫен лайăхрах сÿтсе йавăр...

Халăх пурте шăп. Токлат пĕтрĕ. Кĕтмен çĕртенех пĕри кăшкăрса йаҫĕ:

— Вăхăтлă ĕçленĕ, тесе йышăнмалла. Ресолутси çырма комиçси уйăрмалла, халăх çинҫе çирĕплетмелле.

— Парăр мана сăмах,—терĕ пĕри,—епĕ пуçлăха çак кĕпере ҫасах туса пĕтерменшĕн йатлас, тетĕп!

— Ах, йепле вăл хăйаĭ?..—терĕç халăх хушшинҫе. Кайарах тăракансем криттĕк сăмахне итлесшĕн çăвартан сывлăш кăларма та ҫарăнҫĕç.

— Хытах йатламалла! Иепле вĕсем ĕçлеççĕ, курăрха?!...

— Кала, кала, терĕ пуçлăх.

Ăна кĕпер çинҫен каласассăн, вăл кăшкăрса тăкаĭ:

—Апла тума пултараймасĭ вăл. Сисмен çĕртенех пуçлăхăн сас паракан пыр шăтăкĕ таталсан мĕн тăвăр? Е? Вăл пирĕн пуçлăх... Вăл пирĕн пĕҫҫен. Унăн хăйне-хăй сыхласа пурăнмалла. Çавăн пек сĕтел çине аллисемпе шарглаттарса йатлаçма йурати? Иурамасĭ!—Тен сĕтел çинҫе пулĕ пăта, вăл ун çине шарт çапаĭ, пăти аллине йарт çураĭ. Иун тухаĭ, пуçлăх пăсăлса вилме пултараĭ.

— Тĕрĕс, терĕ пĕри.

— Тата пирĕн пуçлăх урамра вăрçса кĕписене ҫĕрсе пĕтернĕ, çапçарамасах йулнă йалти паллă хуликансене кĕпе парса тăхăнтартса йараĭ, вĕсен хутне кĕрет. Вилнĕ выҫăхсемшĕн страховккă тĕрĕс партармасĭ. Сăра, ерех ĕçсен, выҫăх вилни çинҫен ĕнентерÿ параĭ. Çынсем патне кĕрсе страховккăшăн сăра ĕçни, хуликансене кĕпе тăхăнтаргни аван мар... Ну, пирĕн пуçлăх ыр кăмăллă... Пурне те ырă тăвасшăн çунаĭ...

Ну, епĕр йепле пăхатпăр çак ĕç çине? Çак йалти хуликансене кĕпесем тăхăнтартса хăй ун хыççăн тăхăнни, çынсем патне кĕрсе кăмăлшăн сăра ĕçни хыççăн, тен пирĕн пуçлăха йерĕ çихвилĕс, кĕçĕ, тиф?—Вилет вара пирĕн пуçлăх, пĕтрĕ хаклă ăс!..

Пуху хытă шавласа алсем çупни кăна курăнҫĕ. Халĕ ĕнтĕ пуху иртни 4—5 уйăх та çитет. Кĕпер тăвакансем каллех лайăх кун кĕтеççĕ. Кĕркунне пулиха ырă кун, теççĕ вĕсем.

ТИЛĔ ТУС.

# Пулă хăтараҫ.

Ĕлĕкхи саманара Мелниккăвăн ҫил арманĕ пурҫĕ, халĕ ҫук. Анҫах вăл аптăракан йышши мар. Тупаҫ вăл хăйне валли ĕҫ. Хал вăл кулак пулсан та темле майпа йалсовет претҫетаттĕлне кĕнĕ. Ҫĕлхи йака. Такама та ҫавăрма пултараҫ. Иала та хăй йенне ҫавăрса пуҫлăха кĕрсе ўкнĕ. Вырăнта ĕҫлеме ĕҫлет те, вăл ҫеҫ ăшне кантармасҫ. Мелниккăв вăл ĕҫҫен йапалаҫкеха! Краскăпа тата тырăпа сутуилў тăваҫ. Пушă вăхăтра йўҫҫине вĕретет. Ĕҫет, кайран „саккускă" пулă ăшăтса ҫийет. Нумай пулмасҫ пĕр 50—60 пăт тырă йўн хака пухса пысăк хакпа сутса йаҫĕ. Вăхăтĕнҫе илет, вăхăтĕнҫе сутаҫ.

Райĕҫтăвкомри хăш-пĕр «ĕҫлекеппе» пит тус пурăнаҫ. Килсенех ҫатма ҫинҫе пулă ăшăтса ҫитерет, сыпма та манмаҫҫĕ, конешнă.

— Мĕнле ĕҫсем?—ыйтаҫ вара Мелниккăв РĔК-ран килнĕ ҫынтан. — Вăл ку ҫукиха?

— Тўррипех калап, сыхă тăр—тавăрса калаҫ леш ҫулă, ăшаланă пулă ҫимласа—йури килтĕм. Сан ҫинҫен хут ҫырса панă.

— Ну у?

— Вăт сана «ну»! Ес итле. Савăн сутлăх тырру пур, теҫҫĕ. Сут ҫасрах. Итле мана.

— Ак, тамаша, итлемесĕр. Спаҫҫипă сана, систернĕшĕн. Хе-хе-хе!

Хăвине ăсатсанах тыррине „пуҫтараҫ". РĔК-ран килсе пăхаҫҫĕ те, тырă ҫук, такам мурĕ суйса ҫырнă. Ах, усалсем, йепле хăтланаҫҫĕ. Суйса ҫырма йураҫи?

Ерех йухтарма ăста вĕренсе кайрĕ. Темле хайаррине те тума пултараҫ.

Пĕр кĕтессе кĕрсе лараҫ те, ерех йухнине сăнаса лараҫ. Пуҫра тĕрлĕ плансем: ҫакланас марҫҫĕ, РĔК-рен килекенсене валли авантараххисене хатĕрлесҫĕ, тырă ытларах йўн хакпа илсе йуласҫҫĕ. Шухăш нумай. Саккускă валли пулă хатĕрлес. Вăт мĕн шухăш унăн тăвăр пуҫĕнҫе.

— Асту-у, ҫакланатăн акă, пит асма йурамасҫ, тесе систереҫҫĕ хăшĕ-пĕри. — Ҫитменнине тата, претҫетатгĕл есĕ, «струкă» пулĕ.

— Е ей,—сулаҫ вăл аллине—халҫен тытман, кам тыттăр мана, шанҫăк пур ман. Хи-хи-хи. РĔК-ре паллакансем пур. Пулă ăшăтни ҫухалмасҫ вăл!

Иухтарса пĕтерсен ҫи хайарне ĕҫсе ўсĕрлет те, йал тăрăх ҫамрăк арăм, йе хĕр шыраса ҫўрет.

— Шырасан тупăнаҫ вăл,—шăлне йĕрет пуҫне пăрса хурса,-шырас пулаҫ.

Тупаймасҫ те ирĕксĕр тапăнма та вăтанмасҫ. Хăйĕнҫен ҫынсен кулаҫҫĕ:

— Ырра асман пуҫ, теҫҫĕ вĕсем.— Ҫакланĕха. Ўкĕнекенсем те пур.

— Ма суйларăмăр мура, тесе тарăхаҫҫĕ,—йал йатне йараҫ. Иăнăшрăмăр. Ҫапла. Ăна суйласа пысăк йăнăш тунă Ĕсмĕл (Шупаш. рай.) хресҫенĕсем. Анҫах вăл йăнăша тўрлетме йăварах марҫке? Вăл хăй «хăнасем» валли пулла ҫатма ҫинҫе ăшаланă пек, ăна «ăшаласан» сийен пулас ҫук.

СĔЛТĔРМЕН.

## Сутра.



СУТИЕ: Хăна айăплă тесе шутлатни?

АИĂПЛАНАКАН: Карҫăкшăни? Хамăн карҫăкшăни? 30 ҫул хушши хĕнерĕм—пĕре те айăплă пулманҫĕ... Тур ҫырлахах айăплă пулма!..

# „Алла алӑ ҫӑваӗ“ йе Паймеккиатӑ.

(Канашри Петтехнӗккӑм пуҫлӑхӗ Паймеккӑв йулташ хӑй аллине ҫунӑ хыҫҫӑн хӑйне хӑй шухӑшласа выртни).

— «Алла алӑ ҫӑваӗ, иккӗшӗ те шурӑ пулаҫҫӗ»... Аван пословитсӑ. Ку йапалана манӑн та асрах тытас.

Акӑ епӗ хам та ҫурӑм. Тасалҫӗ. Шӑлса йаракансем те пур. Татах та тупатӑп.

Акӑ кӑрпилласем илтӗм тесе, 78 тенкӗлӗх раҫпискӑ турӑм. Куҫмин тесе алӑ пусатӑп. Кукӑрткаларах ҫырсассӑн пулаӗ.

78 тенкӗ кӑсйере пӑсмасӗ вӗт.

Арӑмпа ман самеҫтитӗл туслӑ. Хам та лайӑхах иккӗн пӗр пулса пӗр ӗҫшӗнех икшер хут укҫа илетпӗр. 154 тенкӗ лартрӑмӑр. Алӑ алла ҫӑваӗ.

Епӗ хам кӗнекесене хамах (Петтехнӗккӑма) мӗнле хак хурас тенӗ ҫапла хӑшне 30-шар тенке сутатӑп.

Самеҫтиттӗлӗм Павлӑв йулташ—пӗр ҫалӑша йахӑн каҫунни вутта хӑй ҫӑланне туртса тулӑрҫӗ те, унтаь:

Препотаваттӗлсене каҫонни вутӑ памалла мар, тесе приккас вуласа патӑмӑр. Лайӑх: епӗ те шарламастӑп, вӑл та...

— Тӑват алӑ ҫеҫ мӗн вӑл?.. Шухӑшларӑм, шухӑшларӑм та хамӑр стурӑша (техн. служ.) 12—13 роҫпискӑ тутартӑм. Пӗр 576 тенкӗлӗх пур. Кун алли те таса ҫӑваӗ.

Ҫӑвашвӑрмантрес акӗнҫне Походҫупӑва та шӑлгарса типӗттермерӗм аллӑма.

Шупашкартан та хӑнана турткалатӑп. Ал ҫуни пӑсакан мар. „Алӑра 100 пус ан пултӑр та, 100 тусна умрах выҫатса тӑрат, теҫҫӗ вырӑссем. Ку та тӗрӗс ман шутпа. Паймеккӑв паймйот. Епӗ вӗт епӗ...— тет те кххӗм ӗсӗрсе илет.

150 тенкӗ тӑракан пӳртекӳ тума 360 тенкӗ пӗтернӗ туса хуратпӑр, 2000 тенкӗлӗх 3-мӗш номӗр фликеле 3600 тенкӗ йеннелле туртса пыратпӑр.

— Ма пурнас мар!.. 1927-мӗш ҫул кирлӗ пек хисепрен ытлашши 21 купа йахӑн вутӑ ҫунтарттартӑм. Супӑҥ ыгларах сӗрсессӗн, ку та пухкалтери урлӑ лайӑхах иртет.

— Кам та кам варалас тет тӑк, акӑ (ҫышкине ҫӑмӑрлаӗ) кӑтартатпӑр.

Ӗлӗк хам Хӗрлӗ Ҫутай шкул пуҫлӑхӗ ҫухне ҫавнашкал ирсӗрлӗхсене туртса кӑларасшӑн пулнӑ Елеменккина вӗрентрӗмӗр вӗт. Уроксем памарӑмӑр, ытти вак-тӗвек... хӑйех пӑрахса кайрӗ.

Халӗ те ҫавнашкал тӑватпӑр. Ревиҫи мӗн ҫухне «алла алӑ» тенине манса хӑварсассӑн, Васҫилйӗвсене т. ыт. сирпӗтмелле... Наркомпроса кайса аллӑма ҫӑвӑпӑр.

Татах шӑлса типӗтмелли пурха, сторӑша ҫӗнем.

— Ей, кам, килха...

Сторӑш тата та кӗҫӗ, анҫах пӗҫҫен мар: ревиҫи комиҫҫи, финанс инспектӑрӗ, райӗҫтӑвкомпа райпартком претставитӗлӗ т. ыт.

— Епӗ 576 тенкӗлӗх раҫпискӑна йышӑнмастӑп, ӑна Паймеккӑв ирӗксӗрлесе ҫыртарҫӗ, тесе хуҫӗ сторӑшӗ.

Петсоветӑн ийунӗн 4 мӗшӗмҫе пулнӑ постановленийӗ (8-мӗш номӗр протгокол) куҫ умне тухса тӑҫӗ.

„Пирӗн йалӑн“ 25-мӗш номӗрӗ...

— Ӗҫе 3-мӗш уҫасткӑри проккурор помошнӗкне парас. Паймексен „алла алӑ ҫӑваканӗсене“ ушкӑнпех урӑх ҫӗрелле „алӑ ҫуса кӑтартма“ ӑсатас, тенӗ сасӑ илтӗнҫӗ.

— Паймеккиатӑ—кӗсен, ӑна ҫунтарса ывӑтӑр...

Тӑрас пулҫӗ Паймеккӑвӑн ӑшӑ вырӑнтанах: Наркомпроса ҫеҫ мар... массӑ ҫине куҫ уҫса пӑхмалла.

„Капкӑн“ урлӑ ал ҫума тухаӗ. Мӗнле супӑҥ тупӗши тасалма?

Пролеттари патшалӑхӗн те „алла алӑ мӗнле ҫунине“, Паймеккӑв йышшисене мӗнле ҫуса тасатма кирлине те лайӑхрах кӑтартас пулаӗ.

КӐЛТӐРШИ.

## ШУПАШКАРТА.

Хуркайӑк пек каргаланса,
Ҫерет кӗтсе тӑтӑмӑр.
Ҫерет ҫитрӗ—укҫа парса...
Кулаҫӑсӑр йултӑмӑр.

Трактӑр.

## Хиромант.



Хӗрӗ: Ал тупанӗ йӗрӗсем тӑрӑх ман кӑмӑла пӗлеймӗнши есӗ?

Кађђӑ: Пӗлме пултаратӑп. Есӗ супӑњ йуратмастӑн.

---

## Арманти йӗкехӳресем.

Хресђен: Автрарӑн пулмалла есӗ кив арманпа. Кӗреҫе ҫӑнӑхсӑр пуҫне те пӗр мӑйӑх авӑртнӑ ҫӗре сахалтан ҫур пӑт арман ђул айне йулат̆ те.

Арман хуҫи: Ӑна, мошенник, йӗкехӳресем шӑтарнӑ.

Хресђен: Ҫавсемех ҫав айӑплӑ... ҫӗнӗ арманне лартма та вӗсемех пулӑшаҫҫӗ.

Туканаш.

## Ђӑн пӗђӗк ђӗр-ђун.

— Ђӑн пӗђӗк ђӗрђунсем мӗнлеђӗ-ха? Микроп...

— Слонсем. Мӗншӗн тесен, микропсем пысӑклатакан машшинӑрап пӑхсан курӑнаҫҫӗ. Слонсем, ђӑваш хушшинђе, тем виттӗр пӑхсан та курӑнмаҫҫӗ.

Катӑркас.

## Кӗҫнернири камит.

Кӗҫнерни-пасарӗнђе (Мӑн Сӗнтӗр, Тутаркас районӗ) пољнитсӑ кил хушшине ӑратлӑ (йӑхлӑх) ӑйӑрсем усрамалли туса хунӑ.

(Ҫыруран).

### Ҫывӑхри йал поеђӗ:

Пит ђапланђӗ, пит мӑнланђӗ  
Камитланђӗ Кӗҫнерни;  
Сывмарсемшӗн, халсӑрсемшӗн  
Вӗҫсе ҫитрӗ «ҫу ерни».  
Тӗнђе, тупрӑн емел-мелӗ  
«Камит-слуђкӑ» ӗҫлени...

### „Слуђпункт“ пуҫлӑхӗ:

Ӗҫсем аван, питех аван. Епӗр выђӑх-ђӗрлӗх куљтивирӑват̆ тунине пӗтӗм пољнитса килен хурахалӑх курат̆. Ӗҫӗ хӑйех реклама... Ма савӑнса ӗҫлес мар?

### Райӗҫтӑвкомрисем:

Пысӑк утӑм йарса пусрӑмӑр хамӑр ӗҫре. Ђӑваш выђӑхне шултралататпӑр. Пољнитса кил-карти ӗлӗк пушӑ вырташђӗ. Халӗ унта куллен 30 40 кӗсре ӗҫе килсе кайат̆. „Ҫӗр ҫинђе пӗр лаптӑк та, ђике ан вырттӑр“ тене лосӑнка пурнӑҫа кӗртрӗмӗр...

### Сывмарри.

(Айалти кӗпепе ђупса тухса):

А.... Ай, ађа, капӑрҫке. Иумахри илем! Арӑм, арӑм! Наҫтукӑм! Мускавра пысӑк театӑр пур теђђӗҫ. Ҫавнах курма пӳрђӗ вӗт. Иал ҫыннине те камит курма тивӗҫ ҫитрӗ. Ах, савӑнӑҫлӑ таҫке!. пӗтӗм ђун хавалӗпӗ ӑшӑрхаса, пиҫсе кайрӑм!

(Кил хушши варне кайса ӳкет).

### Пољнитсари ҫеҫтра.

(Хашкаса ђупса ҫитег):

Ах, аптраса ҫитрӗм ӗнтӗ. Ҫавӑнтах ҫавӑнтах ђӑмат̆. Ђӳређерен уйӑрма ҫук—выртмаст̆... 40 кратӑс ытла вӗрилентерсе пӑрахнӑскер, аташат̆ аташат̆ те: туйсене, арӑмне асӑнса, кил хушшинелле тапаланат̆. Икӗ хут тухса тарђӗ ӗнтӗ... Тем тӑвас?

Ҫыракантан: Мӗн тӑвас тетӗн. Сӗнтӗрӗнђе кун пек стсенӑсем татах вумайха. Ҫине тӑрсах „Капкӑн“ лартас терӗмӗрха. Кун пек пысӑк сопыттийе тӗнђе тӑрӑх ратиолама та тивӗҫ пек.

Ваҫанкка.

# „Тĕрĕс мар“...

Иалкорсен саметкисене тĕрĕслес ĕç пирĕн паҫартарах пырат̆.

Киремет ҫырми тĕлĕпе иртсе кайнă ҫух, Каҫака Петри сасартăк тĕлĕнсе шыв лупашкинелле пăхрĕ. Мĕн хăйамаҫĕ? Лупашкана урлă сысна выртат̆... Так, так, сыснах... А ун хӳри патĕнҫе мĕн йавăлĕ? Ҫăтаймарĕ Петĕр, патнерех пыҫĕ... О, ҫорт! Ҫын!—Е-ей, кам кам ес, тăрсам!—терĕ Петĕр. —Тă-ăр! Тăмаст̆...

Петĕр йăпăр-йапăр ҫынна сулахай уринҫен тытрĕ те, типпелле туртса кăларҫĕ. Кăларҫĕ те... хăй те хăраса кайрĕ! Сыснапа пĕрле ҫемҫе ҫĕрте ҫывăракан—йалсовет ҫыруҫи пулнă! Ак тамаша!

— Ăҫтан ҫеклентĕн есĕ кунта?—тесе ыйтрĕ Петĕр.

— С... сана мĕн?! Н-на! терĕ те леш хирĕҫ, Петĕре кăвак тăмлă аллипе пĕррех питĕнҫен ҫиҫҫе йаҫĕ. Симĕсĕн-кăвакăн ҫутăлса кайрĕ сылтăм куҫ.

— Ма ҫапан? терĕ Петĕр тарăхбипе ҫăн-ҫăн каҫакан пек пулса кайнă сассипе.

Унҫҫен те пулмарĕ, лешĕ ывҫи ăшне сурҫĕ те, тепĕр йенҫен ҫутăлтарса йаҫĕ... Пит ҫăмарти ҫирĕм хĕр ҫуп тусан та кун пек пĕҫерес ҫук пулĕ... Петĕр анҫах тавăрса пама аллине ҫĕклерĕ, сасартăк ăна хыҫалтан урăх алăсем ҫулса илҫĕҫ! Петĕр йулташĕ—Урпаш Ваҥкки мĕн.

— Мĕн хăтланаттăр?—терĕ вăл хашкаса.

А вот мĕн! терĕ те йалĕҫтăвком ҫыруҫи, кăна та кăвапа тĕлĕнҫен панлаттарҫĕ.

Ҫăтаймарĕ Ваҥкка, йалĕҫтăвком ҫыруҫин каҫăр сăмсинҫен килокрамм йăвăрĕш ҫăмăрĕпе пĕррех паҫĕ, вара лешĕ кайалла ҫакса кайса, канлĕн ҫывăрса выртакан сысна ҫумне тирпейлĕн кĕрсе выртрĕ...

Петĕрпе Ваҥкка килелле утрĕҫ.

— Тавай, Петĕр, хаҫата ҫырăпăр, терĕ Ваҥкки.—Ку анҫах марха, тата пур ун...

— Леш каҫхине Макар арăмĕ патне лаҫҫа алăк айĕпе хырăмпа шуса кĕнĕ... Леш аран тухса тарнă...

— Иртнĕ ернере пуйан Куҫук патĕнҫе виҫĕ кун претҫетаттĕлĕпе иккĕшĕ те ĕҫкĕре пурăнна, тет... Каҫпала тата тĕрлĕ фактсем пуҫтарҫĕҫ те, тепĕр кунне саметкă ҫырса йаҫĕҫ.

* * *

— Ваҥкка, ат̆аха йалсоветне! Сана ҫĕнеҫҫĕ... Милитси ҫĕнет!—терĕ пĕр ирхине ҫӳреҫе айĕнҫе Митри муҫи, калифе пек сарлака сухалне силлесе. Ниме пĕлмесĕр, Ваҥкка йалсоветне вĕҫтерҫĕ. Пӳрте кĕнĕ-кĕмен, сăмакун шăрши сăмсана кăтăкласа илҫĕ. Милитси сĕтел ҫиве хунă пуҫне ҫĕклесе тӳрех:

— Т... ты штоҫ ҫелкор, а? Ковори правтă перет влаҫт̆йу! терĕ Ваҥккана. Иулташу ăҫта?

Ваҥкка та вырăсла ответлама тăҫĕ.

— Пасара кайаххăл... Еп не йалкор... Хăй вăшт кăмака кукринелле пăхса илҫĕ те, унта сак ҫинҫен хураналла йалсовет ҫыруҫи тирпейлĕн хăсса выртнине курах кайрĕ...

— Е.., ес, товаришҫ селкор суйса ҫырнă! Апла хамăр рапотнĕксен авторитетне уронит нелҫа! Та... Еп тĕрĕслерĕм, конешнă. Вăл сыснапа пĕрле ҫывăрни палăрмарĕ... Сана вĕсем мокут сута памашкăн! Та!.. И поттом... Ыттине каласа ҫитереймерĕ, сак ҫинелле ҫалăшса кайса, сĕткенлĕн хăсса йаҫĕ...

———

— „№ йалсовеҫĕ ҫинҫен ҫырни тĕрĕс пулманни тĕрĕслени хыҫҫăн аван курăвҫĕ“... тесе пĕлтерҫĕҫ ретаксине...

ЛЕОН. ЛИНҪ.

## Ҫивĕҫ йапала.

**Амĕш:** Ҫивĕҫ йапаларан пăрăнса ҫӳрес пулат̆. Тытма йурамаст̆ ăна.

**Аҫи:** „Капкăна“ тытма йурати тата.

## Ларат̆.

— Сирĕн претҫетаттĕл ҫинҫе тумтир лайăх ларат̆.

— Тумтирне пĕлместĕп. Претҫетаттĕлĕ лайăх ларат̆ вара... тĕрмере.

# КАПКĂН




## ПУРИ САН

тырă вырнă
вăхăтсенҫе

## ВУЛАМА?

Илме ăна хаклă мар. Ҫулталăка 1 тенкĕ. Кашни уйăха 10-шар пус укҫа тупма пултаратех такам та. Укҫа вырăнне маркkăсем йарсан та йурать.

Поҫта кайма инҫе пулсан писмоностсă урлă та ҫырăнса илме пулать.

**АТРĔС:** Чебоксары, Конторе газ. „КАНАШ“ (для „КАПКĂН“).

# Т̆ухтăр патĕнђе.

Хăшĕ-хăшĕ кунне икшер хуҭ кулађ ђеретĕнђе тăраççĕ.
(Шупашкар çынни)



— Т̆ухтăр: Санăн ытлашши хускалма йурамаст̆. Май килнĕ таран ытлашши утса çӳремесĕрех пурăнма тăрăшмалла.

— Ђирлĕ çын: Ахађ те епĕ ытлашши хускалмастăп. Ик ерне ĕнтĕ кулађ ђеретĕнђе тăратăп.

Отв. редактор **А. Золотов.**

Чувашлит № 686. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“. Нап. 2.650 экз.